***Афанасьева Лариса Геннадьевна,***
***Петрова Василиса Зинововна,***
*Ҫӗнӗ Шупашкарти 4-мӗш вӑтам шкулта*
*чӑваш чӗлхипе литературине вӗрентекенсем*

## МĂНКУН

(Класс тулашӗнчи мероприяти сценарийӗ)

**Пӗлӳ тӗллевӗ:** чӑваш халӑхӗн, ҫамрӑксен иртнӗ пурнӑҫӗнчи илемлӗ йӑла-йӗркипе, ҫамрӑксен юрри-ташшисемпе, вӑййи-куллисемпе тӗплӗнрех паллаштарасси.

**Аталантару тӗллевӗ**: мӑнкун уявӗ савӑнӑҫ йӑли-йӗрки пулнине ҫирӗплетсе парасси, чӑваш халӑхне, унӑн чӗлхине, культурине хисеплеме вӗрентесси, ушкӑнпа выляс, ӗҫлес, пӗр-пӗрне пулӑшас енсене аталантарса ҫирӗплетесси, пӗрлехи ӗҫсем ирттерсе ачасен калаҫу чӗлхине аталантарасси.

**Сапарлӑх тӗллевӗ:** чӑваш халӑхӗн вӑййи-куллинче, юрри-ташшинче илеме курма хӑнӑхтарасси.

**Кирлӗ хатӗрсем:** карҫинкка, сарланӑ ҫӑмартасем.

*Сцена Лиза сцена ҫине чупса тухать, тус-юлташӗсене шырать, чӗнет.*

Л и з а: Ачасем, килӗр, килӗр!

*Сцена ҫине ачасем чупса тухаҫҫӗ,асанне килет.*

Л и з а: Ачасем!

А ч а с е м: Мӗн!

Л и з а: Асанне мана интереслӗ халап каласа пачӗ.

А ч а с е м: Вара?

Л и з а: Каласа пама ыйтсан вӑл сире те каласа парӗ.

А ч а с е м: Асанне, асанне пире те халап каласа пар-ха!

А с а н н е: Юрĕ, ачасем, ыйтатăр пулсан каласа парам. Ваттисем каланă тăрăх Мăнкунта Хĕвел ташласа, савăнса тухать тет. Ĕлĕк авал усал вăйсем Хĕвеле вăрласа кайна тет. Хĕвел вара тӳпере çынсене савăнтарма пăрахнă тет. Вара чăвашсен Улăп паттăрĕсем Хĕвеле хăтарма шутланă тет. Вĕсем пурте пĕрле кайнă та Хĕвеле шыраса тупнă тет. Çичĕ кун та çичĕ каç çапăçнă тет Улăп паттăрĕсем, çапах та çĕнтернĕ-çĕнтернех тет усал вăя. Вара савăнса кайнă Хĕвел ташласа, савăнса тӳпене çĕкленнĕ тет. Çавăнтанпа вара Хĕвел Мăнкунта ташласа тухать тет, çынсене çĕнĕ кунпа, Мăнкунпа савăнтарать тет. Вăт çапла!

А ч а с е м: Мĕнле интереслĕ халап!

А л е н а: Ачасем, эпĕ ирхине кӳршĕре минтер çинче хускалмасăр лартăм та мана 2 çăмарта пачĕç.

Л е н а: Мана та 2 çăмарта пачĕç.

Д и а н а: Пăхăр-ха, мана Мăнкун ячĕпе хреснанне çĕнĕ кĕпе çĕлесе пачĕ!

А ч а с е м: Ай, мĕнле хитре!

Н а с т я: Мана та анне çĕнĕ кĕпе тăхăнтарчĕ, ик кĕсьеллĕ!

А ч а с е м: Чаплă!

Н а с т я: Атьăр çăмарта кустармалла выляр!

А ч а с е м: Выляр! *«Çăмарта кустарни» вăйă*

Богдан:1,2,3!

*Ачасем мăшăрпа тăрса çăмартасене кустараççĕ. Кам малтан çитет, çав кăшкăрать.* Эп çĕнтертĕм!

Б о г д а н: Камăн çăмарти паттăр? Хатĕр-и?

А ч а с е м: Хатĕр! *«Паттăр» вăйă. Ачасем мăшăрпа тарса çăмартасене шаккаççĕ.*

Çĕ н т е р ӳ ç ĕ с е м: Манăн паттăр!

С о н я: Ачасем, хĕвел пытанчĕ. Атьăр чĕнер!

А ч а с е м:

Хĕвел тух, хĕвел тух!
Хĕвел хĕрне курма тух!
Хĕвел хĕрне курмасан
Хĕвел мана курма тух.

Хĕвел тух, хĕвел тух!
Хĕрлĕ çитти сарăпăр!
Хĕвел тух, хĕвел тух!
Хĕрлĕ çăмарта парăпăр.

С а ш а: Тухрĕ, тухрĕ!

В е р а: Атьăр çĕнĕ вăйă выляр!

А ч а с е м: Выляр! *Икĕ ушкăна пайланса çаврăнаççĕ, Диана ӳкет.*\

Д и а н а: Вылямастăп та кун пек! Йăлт кĕпене вараласа пĕтертĕм.

Т а н я: Эп те вылямастăп!

Д и а н а: Апла пулсан

А ч а с е м: Шăп пулăр, шăппăн акрăм,
Шăп пулăр, шăппăн шăтать,
Шăп пулăр, шăппан ӳсет.

Н а т а ш а: Ташă пуç!

Н а т а ш а: Мĕн тутаратпăр?

С о н я: Юрлаттарас!

И л ь я: Эсир мана пулăшăр! *Илья ачасем умĕнче автан пек утса çӳрет.*

А ч а с е м:
Çатан çинчи сар автан
Çунат çапса авăтать
Ку-ка-ре-ку, ку-ка-ре-ку,
Ку-ка-ре-ку!

Çатан çинчи сар чăххи
Сар çăмарта тăвасшăн.
Кăт-кăти-ик, кăт-кăти-ик!
Автан уншăн савăнать
Ку-ка-ре-ку, ку-ка-ре-ку!

И л ь я: Ку-ка-ре-ку!

А ч а с е м: Шăп пулăр, шăппăн акрăм,

Шăп пулăр, шăппăн шăтать,
Шăп пулăр, шăппан ўсет.
Н а т а ш а: Ташă пуç.
А ч а с е м: Пулчĕ, пулчĕ!
Н а т а ш а: Мĕн тутаратпăр?
Б о г д а н: Ташлаттарас!
С о н я: Эсир мана пулăшăр.
А ч а с е м: *такмаксем юрласа ташлаççĕ.*
Т а н я: Ташласа ывăнтăм. Атьăр «Кăшманла» выляр. Эпир кăшман кăларакансем пулатпăр. (*Таня Лиза патне пырать. Ачасем кăшман йăранĕ тăваççĕ, Лизăпа Таня вĕсем хушшинче утса çўреççĕ*)
А ч а с е м: Ир те пулать, каç та пулать
Пире çаплах кларайма ççĕ.
Кăш-кăш кăшман вăрри,
Кăш-кăш кăшман вăрри.
Ир те пулать, каç та пулать
Пире çаплах кларас çук!
Л и з а: Тупрăм, тупрăм! *(Кăшмана сăнаса пăхать)* Ай, ку çĕрсе кайнă!
На т а ш а: Эп-и? Эпĕ самăй свежăй-йи!
*Лизăпа Таня ачасем (кăшмансем) хушшинче утса çўреççĕ.*
А ч а с е м: Ир те пулать, каç та пулать
Пире çаплах кларайма ççĕ.
Кăш-кăш кăшман вăрри,
Кăш-кăш кăшман вăрри.
Ир те пулать, каç та пулать
Пире çаплах кларас çук!
Т а н я:: Тупрăм, тупрăм! *(Кăшмана сăнаса пăхать)* Ай, ку питĕ пĕчĕк!
П о л и н а: Эп пĕчĕккĕ пулсан та – чи хитри!
*Лизăпа Таня ачасем (кăшмансем) хушшинче утса çўреççĕ.*
А ч а с е м: Ир те пулать, каç та пулать
Пире çаплах кларайма ççĕ.
Кăш-кăш кăшман вăрри,
Кăш-кăш кăшман вăрри.
Ир те пулать, каç та пулать
Пире çаплах кларас çук!
Л и з а: Тупрăм, тупрăм! *(Кăшмана сăнаса пăхать)*
К и р и л л: Ай, мана мар!
Л и з а, Т а н я : Санран ыйтса тăмастпăр!
А ч а с е м: 1,2,3 тытрăмăр, тытрăмăр.
Б о г д а н: Ачасем, атьăр «Кушакпа шăшилле выляр»!
А ч а с е м: Выляр! *(Кушакпа шăшилле выляççĕ).*
А с а н н е: Маттур, ачасем, нумай вăйă вылярăр. Тепĕр вăйă выляма вĕрентес-и?
А ч а с е м: Вĕрент, вĕрент.
А с а н н е: Сăрланă çăмарта илетпĕр, камăн çăмарти нумайрах çаврăнать, çав çĕнтерўçĕ пулать. Выляса пăхăпăр-и?
А ч а с е м: Выляр! (*Сăрланă çăмартасем илеççĕ, хытă çаварттараççĕ*)
Д и м а: Манăн нумайрах çаврăнчĕ! Эпĕ çĕнтертĕм!
А л е н а: Ачасем, пĕлетĕр-и?
А ч а с е м: Мĕн?
А л е н а: Анаткасра Мăнкун ячĕпе чуччу тунă! Ярăнма каяр-и?
А ч а с е м: Каяр! Каяр! Ача-пăча урамра, урамра! *(Юрласа тухса каяççĕ)*